(cc) BY



***Храмова Светлана Валерьевна***

учитель

МБОУ «Мижеркасинская ООШ»

с. Мижеркасы, Чувашская Республика

# СИНТАКСИЧЕСКИЕ ОСОБЕННОСТИ ЧУВАШСКИХ ЗАГАДОК

***Аннотация**: в статье рассматриваются синтаксические особенности чувашских загадок. Автор отмечает, что в чувашском языке чаще всего встречаются загадки, которые по структуре являются простыми или бессоюзными сложными предложениями. По мнению автора, загадки становятся средством расширения кругозора и развития познавательного интереса.*

***Ключевые слова**: загадки, синтаксис, подлежащее, сказуемое, простое предложение, сложное предложение.*

***Аннотация**: статьяра чăваш чĕлхинчи тупмалли юмахсен синтаксис уйрăмлăхĕсене тишкернĕ. Автор палăртнă тăрăх, хутсăр тата çыхăну паллисĕр хутлă предложени пулакан тупмалли юмахсем ытларах тĕл пулаççĕ. Тупмалли юмахсем ачасен тавра курăмне, ăс-тăнне тата тавçăрулăхне аталантарма пулăшаççĕ.*

***Тĕп сăмахсем**: тупмалли юмахсем, синтаксис, подлежащи, сказуемăй, хутсăр предложени, хутлă предложени.*

Тупмалли юмахсемпе ĕлĕк кулленех усă курнă, çавăнпа та вĕсем пур халăхăн та тенĕ пекех кĕске, сăнарлă, витĕмлĕ сăмахсем. Кĕске тени вĕсем кирек хăçан та хутсăр предложенисем кăна пулма пултараççĕ тенине пĕлтермест. Хамăр статьяра эпир чăваш чĕлхинчи тупмалли юмахсен синтаксис уйрăмлăхĕсене тишкерес тĕллев лартрăмăр. Тытăмĕпе тупмалли юмахсем хутлă та, хутсăр та пулма пултараççĕ: *Çичĕ тĕслĕ çут хăю Атăл урлă ывтăннă*. (Асамат кĕперĕ) *Пӳрт хĕрринче йĕке пур, хĕвелпеле ирĕлет*. (Пăр ярапи) *Çулсеренех пĕр пике килет, çутă кунсем илсе килет*. (Çуркунне) *Лаша чупать, çĕр чĕтрет*. (Аслатипе çиçĕм)



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Тупмалли юмах пулакан хутсăр предложенире подлежащи ытларах çак формăри пуплев пайĕсенчен пулать:

1) тĕп падежри пайăр е пайăр мар япала ятĕнчен: *Вăрманта кăвак Макаç çӳрет*. (Кашкăр) *Пӳрт умĕнче Чиперпи ташлать*. (Тумлам) *Пĕчĕк мучи мунча тăвать*. (Арлан) *Нӳхрепе хĕсĕр ĕне çӳрĕ*. (Йĕке хӳре);

2) тĕп падежри местоименирен: *Çут тĕнчере мĕн мăнтăр?* (Çĕр) *Пылпа çуран мĕн тутлă?* (Ыйхă) *Çак пӳртре мĕн кичем?* (Кĕл);

3) 3-мĕш сăпат аффиксĕ йышăннă япала ятĕнчен: *Асаттен пĕр хĕрĕ ула куна юратать*. (Кĕркунне) *Шур вăкăрăн тирĕ урлă*. (Хурăн) *Кĕмĕл çурлан аври çук*. (Уйăх) *Асаттен çурчĕ нихăçан та çĕрес çук*. (Тĕнче)

Сказуемăй – подлежащин ĕçне е пĕр-пĕр паллине кăтартакан тĕп член. Вăл ытларах глаголăн сăпатлă формисенчен пулать, подлежащи кăтартакан япалан ĕçне палăртать.

Тупмалли юмахсенче сказуемай ытларах чухне сăпатлă тата сăпатсăр формăри глаголсенчен пулать: *Кăвак хирте мамăк куписем выртаççĕ*. (Çумăр пĕлĕчĕ) *Асаттен пĕр хĕрĕ шурă куна юратать*. (Хĕл) *Асатте урхамахĕ çĕр кисретсе кĕçенет*. (Аслатипе çиçĕм) *Пĕчĕк пичче çара йĕп витĕннĕ*. (Чĕрĕп)

Хутлă предложени пайĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннине кура предложенисем сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă тата çыхăну паллисĕр хутлă пулаççĕ.

Сыпăнуллă союзсемпе çыхăнакан хутсăр предложенисенчен пулнă хутлă пĕрлĕхе сыпăнуллă хутлă предложени теççĕ. Çыхăнтаракан союз тĕсне кура сыпăнуллă хутлă предложенисем виçĕ ушкăна уйрăлаççĕ: 1) сыпăнтаракан союзлă; 2) уйăракан союзлă; 3) хирĕçлекен союзлă.

Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пулакан тупмалли юмахсенче ытларах *та (те)* союз тĕл пулать. *Та (те)* – калаçу чĕлхинче те, литература чĕлхинче те çине-çинех тĕл пулакан сыпăнтаракан союз. Ку союзпа çыхăнакан хутлă предложенири хутсăр предложенисен сказуемăйĕсем час-часах пĕр вăхăт форминчи глаголсенчен пулаççĕ, пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç пулнине



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

кăтартаççĕ. Прозăра, илемлĕ литература произведенийĕсенче кун пек предложенисем çине-çинех тĕл пулаççĕ, анчах тупмалли юмахсенче çукпа пĕрех.

*Та (те)* союз хирĕçлеве те палăртма пултарать, кун пек чухне хутлă пĕрлĕхри хутсăр предложенисен сказуемăйĕсенчен пĕри пурлă формăра, тепри çуклă формăра тăрать, е вĕсем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчсен пулаççĕ: *Уйăх пур та, çути çук.* (Тăмана шăтăкĕ) *Юнĕ пур та, чунĕ çук.* (Палан) *Чупма халĕ пур та, чунĕ çук.* (Пăрçа)

*Тата* союзпа çыхăнакан хутлă предложенисем пулакан тупмалли юмахсем çукпа пĕрех.

Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пулакан тупмалли юмахсенче ытларах *çапах, анчах* союзсем тĕл пулаççĕ. *Çапах* союз хутлă пĕрлĕхри хирĕçлетсе каланине кăтартакан предложенисене çыхăнтарма пулăшать. *Çапах* союз *анчах* союз пĕлтерĕшне çывăх тăрать, вырăс чĕлхинчи «все-таки», «однако» союзсен пĕлтерĕшне палăртать. *Çапах* союзпа çыхăннă хутлă пĕрлĕхре хирĕçлев пĕлтерĕшĕнче килĕшӳсĕр сĕмĕ палăрать: *Хăй пӳрт тулли, çапах та ăна курма çук* (Сывлăш).

*Анчах* союзпа çыхăнакан тупмалли юмахсем сайра хутра кăна тĕл пулаççĕ. Пирĕн картотекăра уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложени пулакан тупмалли юмахсем те çук.

Пайĕсем пĕр-пĕринпе пăхăнуллă çыхăнура тăракан пĕрлĕхе пăхăнуллă хутлă предложени теççĕ. Содержани енчен пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнура тăнине кура пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсенчен пĕрне пăхăнуллă предложени, теприне тĕп предложени теççĕ. Тĕп предложени тытăмĕнче çыхăну мелĕ пулмасть. Пайĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннине кура чăваш чĕлхинче пăхăнуллă хутлă предложенисене çакнашкал ушкăнлама пулать:

1) союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем;

2) союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем;

3) хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем;

4) пайĕсене аффикспа çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем;



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

5) пайӗсене вырӑнӗ-йӗрки урлӑ ҫыхӑнтаракан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем [1, с. 292].

Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пулакан тупмалли юмахсем питӗ сайра тӗл пулаҫҫӗ: *Кашта тулли шурӑ чӑхӑ*. (Шӑлсем) *Кӑвак тинӗс тулли кӗмӗл пулӑ*. (Ҫӑлтӑрсемпе тӳпе)

Пайӗсем кӗрет ҫыхӑну паллисӗр ҫыхӑнакан хутлӑ пӗрлӗхе ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени теҫҫӗ. Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени пулакан тупмалли юмахсем сахалах мар: *Хӗрлӗ туна, кӑвак куҫ*. (Кӑшман) *Эпир пиллӗкӗн ҫулпа пыратпӑр, пӗри аташса юлчӗ*. (Алса тӑхӑнни) *Асатте хапха уҫать, асанне ҫӑмхи тухать*. (Хӗвел) *Ашшӗ тӳрӗ, амӑшӗ кукӑр, хӗрӗ лӑпсӑркка, ывӑлӗ пит хаяр.* (Хӑмла) *Уйӑх акать, хӗвел пухать*. (Сывлӑм) *Пӗвӗ ҫук, ури ҫук – пӗр вырӑнта тӑни ҫук; ҫулӗ ҫук – ҫитсе курман ҫӗрӗ ҫук*. (Ҫил) *Ури ҫук – ҫӳрет, куҫӗ ҫук – йӗрет*. (Ҫумӑр пӗлӗчӗ)

Тупмалли юмахсем ачасен ӑс-тӑнне ҫивӗчлетеҫҫӗ, тавра курӑмне анлӑлатаҫҫӗ, тавҫӑрулӑхне аталантараҫҫӗ. Ҫавӑнпа шкулта «Синтаксис» темӑна вӗрентнӗ чухне тупмалли юмахсемпе усӑ курма питӗ меллӗ. Ҫакна та палӑртса хӑвармалла: тупмалли юмахсем, ваттисен сӑмахӗсем пекех, халӑхӑн ӑс-тӑнне, кӑмӑл-сипетне, шухӑш-туйӑмне пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ [3, с. 72].

Ҫапла вара, чӑваш чӗлхинче хутсӑр предложени пек йӗркеленнӗ тупмалли юмахсем ытларах тӗл пулаҫҫӗ. Тупмалли юмах пулакан сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем ытларах *та (те), ҫапах* союзсемпе ҫыхӑнаҫҫӗ. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пулакан тӗслӗхсем питех те сахал. Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложени пулакан тупмалли юмахсем вара час-часах тӗл пулаҫҫӗ.

***Список литературы***

1. Андреев И.А. Хальхи чӑваш чӗлхи. Синтаксис / И.А. Андреев. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2005. – 334 с.

2. Ваттисен сӑмахӗсем, каларӑшсем, сутмалли юмахсем / 2-мӗш кӑларӑм. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2004. – 351 с.



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

3. Егорова А.С. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентесси / А.С. Егорова // Проектирование механизмов реализации образовательных инициатив: материалы I Всерос. научн.метод. конф. (Чебоксары, 22 августа 2017 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина, Г.В. Николаева, С.П. Русском. – Чебоксары: Издательский дом «Среда», 2017. – С. 72–74.

4. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Вак жанрсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. – 352 с.

5. Исаев Ю.Н. Описание обычаев чувашского народа на немецком языке (на примере поэмы К.В. Иванова «Нарспи») / Ю.Н. Исаев, М.В. Емельянова, Т.Н. Кузнецова // Вестник Чувашского университета. – 2018. – №4. – С. 244–249.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)